чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН

2014, авăн /сентябрь/ 27

193 /226599/ № Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

РАÇÇЕЙ КУБОКĔ

# Тимĕр вăййипе туслисем вăйлă та хăюллă

## Ĕнер Шупашкарти «Спартак» спорт керменĕнче кире пуканĕ йăтассипе çĕр-шыв кубокĕ старт илчĕ







***Спорт уявĕ савăнăçлă парадран пуçланчĕ. Унта пăхаттирсемпе вĕсен тренерĕсене ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов саламларĕ. «Чăваш Енре спорта аталантарас енĕпе вун-вун ĕç пурнăçланать. Чаплă керменсем çĕкленеççĕ, пысăк пĕлтерĕшлĕ ăмăртусемпе спорт мероприятийĕсем иртеççĕ. Акă çывăх кунсенче Шупашкар Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума йышăнать. Пирĕн республикăра спортпа туслисен йышĕ те пĕчĕк мар, кашни виççĕмĕш çын сывă пурнăç йĕркине пăхăнать. Яшсемпе хĕрсем тимĕр вăййипе те кăсăкланаççĕ, тĕрлĕ турниртан парнесемпе таврăнаççĕ», – терĕ Юрий Алексеевич.***

Спортсменсене çавăн пекех ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, РФ кире пуканĕ спорчĕн федерацийĕн президенчĕ Игорь Солодов, РФ Спорт министерствин физкультурăпа массăллă спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен департаменчĕн директорĕн çумĕ Виктор Бабкин, Олимп чемпионки Елена Николаева, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов тата ыттисем ăнăçу сунчĕç.

Шупашкара 40 регионтан 200 яхăн спортсмен килсе çитнĕ. Палăртмалла: Раççей кубокне пĕрремĕш хут Крым спортсменĕсем /3 çын/ хутшăнаççĕ. Пирĕн республикăн пĕрлештернĕ командин аслă тренерĕ Борис Глинкин пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Ен чысне 15 пăхаттир хӳтĕлет, ытларахăшĕ – Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студенчĕсем /9 çын/, ыттисем – Улатăрпа Елчĕк каччисем. Вĕсен йышĕнче Раççей спорт мастерĕ Александр Павлов, Сергей Соловьев, Иван Кривов, Евгений Кочетков, Елизавета Еремеева, Анастасия Александрова.

Ăмăртăвăн тĕп судйи – Куславкка хулинче çуралса ӳснĕ ентеш, тĕнче чемпионачĕсемпе кубокĕсен темиçе хут çĕнтерӳçи, РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ тата тренерĕ Сергей Кириллов. «Кубок положенине РФ Спорт министерстви темиçе çул каяллах çирĕплетнĕ. Яланхи пекех хĕрсемпе каччăсем уйрăм ушкăнсемпе виçесенче тупăшаççĕ, çавăн пекех вĕсем эстафетăра тата нумай енлĕ кĕрешӳре вăй виçеççĕ. Паянхи турнирта çĕр-шыври чи пултаруллă спортсменсем хутшăнаççĕ, хăшĕ-пĕри Европа тата тĕнче ăмăртăвĕсенче те палăрнă», – ăмăрту программипе паллаштарчĕ хальхи вăхăтра Санкт-Петербургра пурăнакан Сергей Александрович. Кубока унăн воспитанникĕсем те килнĕ – 12 яшпа хĕр. Çав йышра чăваш пикисем те пур. Вĕсем – Йĕпреç тăрăхĕнчи Джанита Щербина-Павловăпа Марина Федорова. Парад хыççăн тупăшăва çăмăл виçери хĕрсемпе каччăсем тухрĕç. Вĕсем чи сумлă парнене тата юпа уйăхĕнче Гамбургра /Германи/ старт илекен тĕнче чемпионатне хутшăнма путевка çĕнсе илессишĕн вăй виçеççĕ.

**Андрей МИХАЙЛОВ.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

АВĂН, 25 — ЮПА, 4:

«Хыпар» Издательство çурчĕн пур кăларăмне те Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех йӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ. Васкăр, укçăра перекетлĕр!

# Хăнасене йышăнма хатĕр-и?



**_Кĕçнерни кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев экономика аталанăвĕн министрĕпе Владимир Аврелькинпа тата тĕп хула пуçлăхĕпе Леонид Черкесовпа Шупашкарти общество апатланăвĕпе суту-илӳ предприятийĕсен ĕçĕпе паллашнă, вĕсем «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумне мĕнле хатĕрленнине тĕрĕсленĕ._**

Гагарин урамĕнчи «Парус» кафере, «Смак» лавккара, К.Иванов урамĕнчи «Евразия» кафере республика Пуçлăхĕ апат-çимĕç пахалăхĕ лайăххине, ассортимент пуяннине палăртнă. «Раççей» хăна çурчĕпе ресторанта пулнă май территорие тирпейлес енĕпе тимлĕрех пулма сĕннĕ. «Мега Гелакси» суту-илӳпе кану комплексĕнче спорт форумĕн кунĕсенче официант тивĕçне пурнăçлакан волонтерсен хатĕрленĕвĕпе кăсăкланнă.

Çул çӳреве пĕтĕмлетнĕ май Чăваш Ен Пуçлăхĕ конкуренцие аталантармалли условисем йĕркелемелли çинчен каланă, çакă социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç хакĕсем сăлтавсăр ӳсесрен сыхланма пулăшĕ. «Чăваш Енре ял хуçалăх продукцийĕ яланах ытти регионтинчен йӳнĕрех пулнă. Паян сутлăхра паха апат-çимĕç пуррине курса ĕнентĕм», – тенĕ вăл. Михаил Игнатьев Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне хальлĕхе Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчен, чикĕ леш енчен 4 пине яхăн хăна килессе çирĕплетнине пĕлтернĕ.

■ **Н.ЯКОВЛЕВ**

НАЦИ СТРАТЕГИЙĔ

# Пултарулăх – кашни ачарах

**_Чăваш Республикин приоритет ыйтăвĕсенчен пĕри – ачасемпе çамрăксен пултарулăхне уçмалли тата аталантармалли условисем йĕркелесси. Çакна шута илсе Чăваш Республикин Пуçлăхĕ çумĕнчи 2012-2017 çулсенче ачасен интересĕсемпе пурнăçламалли Наци стратегине тытса пырассипе ĕçлекен Координаци канашĕн черетлĕ ларăвĕ шăпах çак темăпа иртрĕ._**

Ачасен пултарулăхĕ хăш енĕпе вăйлăрах пулнине тупса палăртасси – ашшĕ-амăшĕн тата педагогсен тивĕçĕ. Çавăнпа та кашни ача шкулчченхи ӳсĕмренех хушма вĕренӳре хăйне тĕрĕслени-хăнăхтарни пĕлтерĕшлĕ. 2014-2015 вĕренӳ çулĕнче республикăра хушма вĕренĕвĕн 128 учрежденийĕ ĕçлет, вĕсенче 3000 ытла пĕрлешӳ хăйĕн тивĕçне пурнăçлать. Çакнашкал ушкăнсенче пурĕ 90 пин ытла ача пултарулăхне аталантарать. Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 5-18 çулти ачасемпе çамрăксен 62 проценчĕ хушма вĕренĕвĕн ку е вăл программине ăса хывма хутшăннă.

Ларура Михаил Игнатьев çӳлерех асăннă процент виçи пирки иккĕленчĕ: «Статистика кăтартăвĕ чăн пурнăçри ӳкерчĕкпе чăнахах пĕр килет-и?» Вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов çийĕнчех ăнлантарчĕ: кăтарту пĕр ачах темиçе тĕрлĕ хушма пĕлӳ илнипе пысăкланма пултарнă. Çакă кăтартусене вĕренӳ, культура, физкультурăпа спорт ведомствисем уйрăммăн пухса пĕрле хушнипе çыхăннă-мĕн.

Ача-пăча пултарулăх аталанăвне çул памалли мерăсем çинчен культура, национальноçсен тата архив ĕçĕсен министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Татьяна Казакова паллаштарчĕ. Муниципалитетсен культурăпа ӳнер тытăмĕнчи хушма вĕренӳ 46 учрежденийĕ çуллен тĕрлĕ фестиваль-конкурса, форума хутшăнса хăйсен «çимĕçĕпе» – ăста воспитанникĕсемпе – халăха паллаштарать. 2012 çулта çавăн пек мероприятисене 16 пин ача хутшăннă тăк пĕлтĕр йыш 1,7 пин çын ытларах пулнă. Кăçал вара вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ кăна пулин те республикипе тĕрлĕ 700 мероприяти иртме, унта 13 пин ача хутшăнма ĕлкĕрнĕ.

Паллах, культура тĕлĕшĕнчен хушма пĕлӳ илес, пултарулăха аталантарас ĕçре район-хулари, ялсенчи культурăпа кану учрежденийĕсен витĕмĕ пысăк. Вокал е театр, хореографи е фольклор, алă ăстисен е çамрăк ӳнерçĕсен ушкăнĕ – ачасемпе çамрăксен хăйсем кăмăлласа кирек хăшне суйлама пултараççĕ.

Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов асăннă ыйтупа тĕп хула ертӳлĕхĕ тимлĕхе ӳстерсе пынине тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ.

Çĕнĕ Шупашкарти Ача-пăча ӳнер шкулĕн çитĕнĕвĕсемпе, ĕç тĕллевĕсемпе тата татса памалли çивĕч ыйтăвĕсемпе унăн ертӳçи Ольга Петрова паллаштарчĕ. Элĕк район администраци пуçлăхĕн социаллă ыйтусемпе ĕçлекен çумĕ – вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ Эдуард Николаев пултарулăха пĕчĕкрен тупса палăртас тата ăна аталантарас енĕпе ачасемшĕн вырăнта мĕнле майсем пуррине тишкерчĕ. Ырă пуçарусем çук теймĕн. Сăмахран, Элĕксем «Ташлакан шкул» проекта анлăлатса пырас шухăшлă иккен. Ачасене пур енлĕн аталантарса пымалли май самай. Татса паман ыйтусенчен пĕри – районта хушма вĕренӳ валли квалификациллĕ кадрсем çителĕксĕрри.

Ачасен интересĕсемпе пурнăçламалли Наци стратегийĕ Шупашкар, Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ районĕсенче пурнăçланипе муниципалитетсен ертӳçисем паллаштарчĕç.

Михаил Игнатьев çемье институчĕн пĕлтерĕшне обществăра çирĕплетсех пымалли çинчен темиçе те асăнчĕ. Республикăри хĕрарăмсен канашĕн ертӳçи Ольга Зайцева чун ыратăвне сăмахпа палăртса кăна çырлахасшăн пулмарĕ. Ача пултарулăхĕ чăннипех тĕрĕс-тĕкел аталанса пынинче ашшĕ-амăшĕ чи яваплисем пулнине çирĕплетсе хĕрарăмсен тата ашшĕсен канашĕсем «Пултарулла пепкен телейлĕ ашшĕ-амăшĕ» буклет хатĕрленĕ-мĕн.

– Ырă тĕслĕхсем пирĕн ĕç-хĕле çăмăллатĕç. Халăхра ытларах пĕлччĕр маттур çемьесене, мăшăрсене, ачасене. Хытма пуçланă чĕресене çакă витерĕ. Çапла ача çураласлăх ӳсĕ, уйрăлакан сахалланĕ тен? – республика пуласлăхĕшĕн мĕн чи пĕлтерĕшли пулнине аса илтернĕн илтĕнчĕç Чăваш Ен Пуçлăхĕн сăмахĕсем.

■ **Ирина ПУШКИНА**

КАНАШЛУ

## Чăваш Ен – лайăххисен шутĕнче

**_Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Эрĕнпурта РФ Президенчĕн Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич ертсе пынă канашлăва хутшăннă._**

Ларура федерацин Атăлçи округĕнчи субъектсенчи вăтам професси пĕлĕвĕн тытăмĕн аталанăвĕпе çыхăннă ыйтусене пăхса тухнă. Чăваш Республики ресурс центрĕсем йĕркелес тĕлĕшпе тухăçлă ĕçлекен регионсен шутне кĕнĕ. Çавăн пекех Чăваш Енре ĕç паракансем вĕренӳ заведенийĕсен вĕренӳ программисене хатĕрлеме хастар хутшăннине палăртнă. Республика – педагогсен тата производство вĕрентĕвĕн мастерĕсен шалăвне ӳстерессине туллин пурнăçланă виçĕ регион йышĕнче.

Округ канашĕн ларăвне хутшăннисем ĕç рынокĕнчи лару-тăрăва та пăхса тухнă. Предприятисем, çав шутра оборона-промышленноç комплексĕ те, валли кадрсем хатĕрлессипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă. Калаçу вăхăтĕнче вăтам профессие пĕлĕвĕн тытăмĕн тухăçлăхне ӳстермелли çул-йĕре палăртнă.

Тĕплĕнрех – çитес номерте.

**О.ПЕТРОВ.**

## Ĕç чарăнман

**_Авăн уйăхĕн 25-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев «РусГидро» АУОн техника политики тата аталану енĕпе ĕçлекен директорĕпе Расим Хазиахметовпа тĕл пулнă. Калаçăва çавăн пекех ЧР Правительствин пуçлăхĕ Иван Моторин, строительство министрĕ Олег Марков хутшăннă._**

Р.Хазиахметов юлашки вăхăтра компани Чăваш Енри предприятисемпе тытакан çыхăнусем çирĕпленсе пынине палăртнă. Вăл пĕлтерĕ тăрăх – Шупашкар шыв управĕн строительствине вĕçлес ыйтăва куçран вĕçертмесçĕ. «Хăшĕсен ĕç чарăнса ларнă текен шухăш пур-тăр. Анчах пиар-анлăшри çак шăплăх – ятарласа тунăскер. Халĕ техника ĕçĕ пырать. Техника, технологи ыйтăвĕсем пурте сӳтсе явакан анлăша тухни вара тепĕр чухне сиен кӳрет. Чăннипе, пирĕн хутшăнусем ĕçлĕ шайра, малалла ĕçлетпĕр», – тенĕ Р.Хазиахметов.

М.Игнатьев шыв управне 68 метр шайне çĕклени Атăл тăрăхĕнчи мĕн пур регионшăн лайăххине палăртнă: Атăлăн экологи лару-тăрăвĕ лайăхланать, карапсем ытларах ишме пуçланă май экономика вăй илет, шыв сахаллипе çыхăннă ыйту сирĕлет, электроэнерги туса кăларасси пысăкланать. «Эпир «РусГидропа» тухăçлă çыхăну тытса ĕçлеме хатĕр», – пĕтĕмлетнĕ вăл.

**Д.СЕРГЕЕВ.**

## Спорт – профилактика никĕсĕ

**_Юн кун РФ шалти ĕçсен министрĕ полици генерал-полковникĕ Владимир Колокольцев ертсе пынипе видеоконференцсыхăну мелĕпе территори подразделенийĕсемпе Правительствăн Раççей Федерацийĕнче правăна пăсасран сыхланмалли профилактика енĕпе ĕçлекен комиссийĕн ларăвĕ иртнĕ._**

Чăваш Енрен канашлăва РФ Наркотĕрĕслев службин республикăри управленийĕн пуçлăхĕ Евгений Барсуков, шалти ĕçсен министрĕн çумĕ Андрей Тимофеев тата ыттисем хутшăннă.

Ларура наркоманипе чирлисен реабилитацине физкультурăпа спорта тĕп инструмент вырăнне хурса пурнăçламалли профилактика мерисене сӳтсе явнă.

Статс-секретарь – РФ спорт министрĕн çумĕ Наталья Паршикова хăйĕн докладĕнче Чăваш Республикине физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе патшалăх политикине ăнăçлă тытса пыракан регионсен шутĕнче асăннă. "Раççей субъекчĕсенче массăллă физкультура мероприятийĕсене йĕркелес тĕлĕшпе пуян опыт пухнă. Чи ăнăçлă тĕслĕхсен шутĕнче – Чăваш Республики. Массăллă физкультурăпа спорт мероприятийĕ нумай, вĕсене кунта çуллен йĕркелеççĕ", – тенĕ вăл.

Халăха спортпа туслаштарассипе, сывă пурнăç йĕркине çирĕплетессипе çыхăннă ĕçсенчен пĕри – Пĕтĕм Раççейри "Ĕçлеме тата хӳтĕлеме хатĕр" физкультурăпа спорт комплексне çĕнĕрен чĕртни. Çĕнĕ ГТО значокĕн презентацине Шупашкарта юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче иртекен Пĕтĕм тĕнчери "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум вăхăтĕнче ирттерĕç.

**К.СЕМЕНОВ.**

### Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем 2014 çулхи юпа уйăхĕнче граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе ЙЫШĂНМАЛЛИ КУНСЕМ

**/Цифрăсемпе йышăну кунĕсене палăртнă/**

| | | |
|---|---|---|
| 06 | В.П.ДМИТРИЕВ | ЧР хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсен тата ытти тĕрлĕ техникăн тĕрăмне тĕрĕслекен патшалăх инспекцийĕн пуçлăхĕ – патшалăх тĕп инженер-инспекторĕ |
| 13 | В.И.ФИЛИППОВ | Чăваш Республикин транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ |
| 20 | В.Н.ИВАНОВ | Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ |
| 27 | В.А.АВРЕЛЬКИН | Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕ |

Чăваш Республикин ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем хăйсен компетенцине кура граждансене харпăр хăй ыйтăвĕсемпе Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕн Йышăну пӳлĕмĕнче 16 сехетрен пуçласа 18 сехетчен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, Республика тӳремĕ, 2-мĕш çурт, 105-мĕш пӳлĕм. Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 62-34-53, 39-36-43.

АТАЛАНУ ÇУЛĔПЕ

# «Муркаш çăмарти»

## Суту-илӳ маркин ячĕ-сумĕ çӳллĕ шайра пултăр

***"Моргаушская" чăх-чĕп фабрики" АУО çăмартисене туянма шухăш тытрăр тăк – сирĕн кăштах черет тăма тивет-тĕр. Умра пĕр 5-10 çын пулатех. Тĕрлĕ брендлă çак çимĕç халĕ суту-илӳре пайтаххине кура, килĕшетĕр пуль, тĕлĕнмеллерех. "Муркаш çăмартине" çынсем мĕншĕн кăмăллаççĕ – пирĕн корреспондент çакна тĕпчесе пĕлес тенĕ.***




Реклама

### Чи лайăххине туянатпăр

"Северная" ярмăркка. Шупашкарти "Муркаш çăмартине" сутакан вырăнсенчен пĕри. Предприятин фирма тĕсĕсемпе илемлетнĕ суту-илӳ павильонĕ çакăнта вырнаçнă. Фирма палли – симĕс çаран çинче ӳсекен салтак тӳми чечекĕсем. Хăйне евĕрлĕ тата илемлĕ символ. Тавар туянма килнĕ Юрий Иванов хăйĕн витрине пĕрремĕш сортлă 60 çăмарта хурса пама ыйтать. Ветераншăн йăлана кĕнĕ ĕнтĕ – холодильникре стратеги саппасĕ яланах пулмалла. Чылай çул "Моргаушская" чăх-чĕп фабрикин продукцине кăна туянать.

"Муркаш çăмарти" чи тутли пирки Наталья Голдобина та иккĕленмест. Чăн та, вăл нумай туянмасть – йăваран тин илнĕ çăмарта пултăр тет. Ӳксен те ванман, экологи тĕлĕшĕнчен таса, 10 çăмарта кĕрекен курупкасемпе усă курма тытăннă май тавара тыкалама пушшех меллĕ – киле тĕрĕс-тĕкел илсе çитересси пирки пăшăрханма кирлĕ мар.

"Муркаш çăмартин" пахалăхĕ пирки Зоя Гончарова та ыррине çеç калать. Ăна çăмарта сарри çутă тĕслĕ пулни килĕшет, хакĕ те тивĕçтерет – вăл пахалăхĕпе шайлашуллă. Екатерина Тихоновăпа та калаçрăм. Вăл анне пулма хатĕрленет – ывăл çураласса кĕтет. Çавна май халĕ апат-çимĕç тутлăлăхĕ, унăн пахалăхĕ пушшех пĕлтерĕшлĕ – çавăнпа Муркашри чăх-чĕп фабрикин павильонне кĕнĕ. Кампа кĕскен те пулин калаçма май пулчĕ – пурте хăйсен юратнă предприятийĕ райцентрта вырнаçнă тесе шухăшлаççĕ. Апла мар. "Моргаушская" чăх-чĕп фабрики" АУО Кораккасси ялĕнче вырнаçнă. Вăрман, уй-хир, Атăл та юнашарах.

### Лидер статусĕпе

Ял хуçалăх предприятийĕ 1968 çулта йĕркеленнĕ. Унăн тытăмĕнче – 12 производство цехĕ, инкубатори, чĕпсене çитĕнтермелли вицĕ цех. Акционерсен обществисен ретне фабрика 2012 çулта куçнă. Коллективра 150 çын тăрăшать. Голландин çăмарта тăвакан Шурă Хайсекс кросĕн чăххисене çитĕнтереççĕ. Çак кросс тӳсĕмлĕхпе, нумай çăмарта тунипе уйрăлса тăрать. Анчах чăхсем "чăкăлташма" та пултараççĕ. Калăпăр, витере лампочка çунса кайтăр-ха – талăкри чĕпсем шыв ĕçмессе, апат çимессе те кĕтме пулать. Ун пек чух инкек пуласси те часах – вилме пултараççĕ. Технологи картти пăсăлĕ. Чăхсене çитĕнтерсе вырнаçтармалли вăхăт виçеллĕ пулни вара – тухăçа ӳстермелли тĕп резервсенчен пĕри. Акă мĕншĕн ĕçе тĕплĕ сăнаса тăраççĕ.

Чĕпсенчен 120 кунрах çăмарта тăвакан чăх тумалла. Çавăнпа лайăх пăхмалла, тăрантармалла – ку паха çăмарта туса илмелли тĕп услови. Микроклимат пĕлтерĕшĕ те пысăк. Хĕле хатĕрленнĕ май фабрикăра производство пӳлĕмĕсене тĕплĕ юсаççĕ, фуражлă тырă хатĕрлеççĕ. Предприяти хăйĕн уйĕсенчен аван тыр-пул пухса кĕртнĕ. Унсăр пуçне айккинчен



8 пин тонна тулă туяннă, вăл – комбикормăн тĕп компоненчĕ.

Çавăн чухлĕ тырра вырнаçтармалла вĕт – хушма икĕ пысăк склада хатĕрлеме тивнĕ. Авăн уйăхĕнче комбикорм хатĕрлекен çĕнĕ станци ĕçлесе кайнă. Германире туса кăларнă "Бушхов Турмикс" агрегат сехетре 12 тонна таран апат хатĕрлеме пултарать. Ку – фабрикăна куллен кирлĕ калăпăшăн виççĕмĕш пайĕ. Апат хатĕрлекен цех операторĕ Леонид Грачев кăмăллă: çĕнĕ машина пысăк вырăн йышăнмасть пулин те тухăçлă ĕçлет. Унчченхи оборудовани вара темиçе комплексран тăнă, икĕ цехра вырнаçнă. Халĕ компонентсене авăртса хутăштарасси пĕр вырăнта.

Фабрикăн тĕп технологĕ Ольга Храмова кивелнĕ техникăна инноваци оборудованийĕпе улăштарнине тĕп тĕллев, пулас çитĕнӳсен никĕсĕ тесе хаклать. Хута янă станци кĕске вăхăтра ытларах апат хатĕрлет кăна мар, унăн пахалăхне те лайăхлатать-çке. Чăхсем ытларах çăмарта тăвасси, çăмарта тутлă пуласси шăпах çакăнтан килет. "Тулăсăр пуçне комбикорм тытăмне хĕвел çаврăнăш хывăхĕпе шрочĕ, витаминсем, тинĕс ракушки, витаминлă курăк çăнăхĕ тата ытти кĕреççĕ. Вĕсене япăх хутăштарсан хăш-пĕр чăхха тутлăхлă компонентсем лекмĕç – çăмарта тăвасси чакать. Çĕнĕ комбикорм станцийĕ вара унашкаллинчен упрать, хутăштарасси 1:100000 шайлашăва тивĕçтерет вĕт", – ăнлантарать Ольга Леонидовна. "Бушхов Турмикс" станцие туянма 15 млн тенкĕ тăкакланă. Çулталăк-çулталăк çурăра хакне саплаштарĕ.

### Хамăр та, çынсем те кăмăллă

"Муркаш çăмарти" – çирĕпленнĕ, пурте пĕлекен бренд. Апла пулин те – лăпланса ларма юрамасть. Пачах тепĕр майлă теме те юрать – çине тăрарах ĕçлеме, продукцие сутмалли çĕнĕ рыноксем шырама хистет. "Моргаушская" чăх-чĕп фабрики" АУО ертӳçисем шăпах çапла шухăшлаççĕ.

Пĕлтĕрхипе танлаштарсан 2014 çулта чăх-чĕп шучĕ 40 пин пуç пысăкланнă, рекорд шайĕнчи 370 пине çитнĕ. Çакă – чи малтанах технологсемпе ветеринарсен ăсталăхĕпе опычĕн, вĕсем Шурă Хайсекс кросĕн чăххисене ӳстерессипе тăрантарассин тухăçлăхĕн ыйтăвĕсемпе ирттерекен семинарсене кайса илекен çĕнĕ пĕлӳсен кăтартăвĕ. Çав семинарсем Хендрикс Дженетикс компанири голландецсем ертсе пынипе иртеççĕ. Анăçри ĕçтеш çапла пулăшса пынин усси пысăк. "Моргаушская" фабрика кăçал потребительсем валли 74 млн çăмарта тиесе ăсатасшăн. Ку планланинчен – 2 млн, 2013 çулта туса илнинчен 7 млн нумайрах.

Çавна кура çынсене йĕркеллĕ ĕç укçи тӳлеме май пур. Вăл районта чи пысăкки. Администрацире "Моргаушская" чăх-чĕп фабрики социаллă обязательствăсене чыслăн пурнăçланипе те кăмăллă. Тĕслĕхрен – хăмла çитĕнтерессе. "Муркаш çăмартине" федераци шайĕнчи "Магнит", "Метро", "Севен" суту-илӳ сечĕсенче хапăл тунине те çитĕнӳ тесе хакламалла. Унта, пĕлетпĕр, продукципе тивĕçтерекенсем тĕлĕшпе требованисем çирĕп. Çирĕп суйлав витĕр тухни – пысăк ĕç.

### "О" – суйласа илнĕ çăмарта

Федераци сечĕсене валли фабрика хăйĕн ассортиментне "Ялти суйласа илнĕ çăмартапа" пуянлатрĕ. Суйласа илнĕ, эппин, чи лайăххи. Кунашкал çăмартана фирма курупкисемпе "О" сас палли хушса сете ăсатаççĕ. Анчах çав курупкасем Чул хулари складсене лексен Чăваш Ене текех таврăнман – ытти региона ăсаннă. Халĕ ку ыйтăва татса панă. "Муркаш çăмарти" Зеленодольскри базăна каять. Маркетологсемпе калаçса татăлнă май "Магнит" сечĕн Чăваш Ен территорийĕнчи лавккисене кирлĕ чухлĕ таврăнать.

Хамăрăн предприятисем туса кăларакан продукци кунти лавккасен сентрисем çинче пултăр тени паян уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Пирĕн рыноксене ытти регионти конкурентсем çине тăрсах "тапăнаççĕ". Тĕллев – хамăр республикăри кайăккĕшĕк ĕрчетекенсен позицийĕсене упраса хăварасси. Çакă республика бюджетне пуянлатас енĕпе пысăк пĕлтерĕшлĕ. "Моргаушская" чăх-чĕп фабрики" АУОн, куратпăр, малалла ӳсмелли, аталанмалли пĕтĕм услови пур. Пĕр сăмахпа, кунти ĕçченсем хăйсен суту-илӳ маркин чысне упрас тĕллевпе малашне те çине тăрса ĕçлеме, çынсене паха çимĕçпе савăнтарма хатĕр.



■ **Леонид НИКИТИН**

# Уяв ячĕпе!

**Машиностроени отраслĕн хисеплĕ ĕçченĕсемпе ветеранĕсем!**

Сире професси уявĕпе пĕтĕм чĕререн саламлатăп!

Машиностроени – республикăри промышленноç комплексĕн тĕп отраслĕ, вăл экономика аталанăвне пысăк витĕм кӳрет, промышленноç производствипе инфратытăма лайăх ĕçлеме пулăшать, ытти ĕç-хĕлĕн тĕрлĕ сферинчи инноваци аталанăвĕн тĕп никĕсĕ пулса тăрать. Чăваш Енĕн машиностроени комплексĕн предприятийĕсенче тăрăшакан 40 пин ытла рабочишĕн çак кун – уяв.

2014 çулта республикăри промышленноç производствинче чĕрĕлӳ-хускану палăрчĕ, экономика секторĕнче пысăк тухăçлă ĕç вырăнĕсен шучĕ ӳсет.

Отраслĕн тăнăçлă аталанăвĕн пĕлтерĕшлĕ факторĕсен шутĕнче – инноваци технологийĕсене ĕçе кĕртни, пурлăхăн, финанс тата ĕç ресурсĕсен мĕн пур енĕпе тухăçлă усă курни, тĕп фондсене çĕнетсе пыни. Предприятисенче çĕнĕ производство йĕркелеме, паха продукцисем кăларма тата техникăна çĕнетсе улăштарма пулăшакан пысăк инвестици проекчĕсене пурнăçа кĕртеççĕ.

Чăваш Ен машиностроени комплексĕн предприятийĕсен продукцине Раççейĕн чылай регионĕнче тата унăн тулашĕнче аван пĕлеççĕ. Вĕсен продукцийĕн пахалăхĕпе шанчăклăхне нумай пинлĕ коллективсен ĕç-хĕлĕ ӳстерсех пырать, вĕсем хăйсен пуян йăли-йĕркипе тата паллă ĕç династийĕсемпе чыслăн мăнаçланаççĕ.

Чăваш машиностроителĕсем тавара ют çĕр-шывсенчен кӳрсе килессине чарнă вăхăтра хамăр çĕр-шыври потребительсене тĕнчери тĕслĕхсемпе тупăшма пултаракан пысăк пахалăхлă продукципе тивĕçтерессине шанатăп.

Машиностроени отраслĕн ĕçченĕсемпе ветеранĕсене Чăваш Ен аталанăвĕпе чечекленĕвĕшĕн тăрăшса ĕçлеме ырă, çирĕп сывлăх, тăнăçлăх сунатăп.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил ИГНАТЬЕВ.**

* * *

Виçĕм кун ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкарти агрегат завочĕн культура керменĕнче Машиностроитель кунне халалланă савăнăçлă пухăва хутшăннă.

Машинăсем тăвакан комплекс ĕçченĕсене уяв ячĕпе саламланă май Михаил Васильевич юлашки çулсенче промышленноçăн çак отраслĕнче аталану туртăмĕсем курăмлине палăртнă. «20-30 çул каялла мĕнлерех станоксемпе, мĕнле условисенче ĕçлени асра – халĕ пĕтĕмпех улшăннă. Конкурентсем тĕлĕрмеççĕ, заводсен хуçисем çĕнĕ проектсене çул параççĕ, отрасле çамрăксем çĕнĕ идейăсемпе килеççĕ», – тенĕ вăл.

Уяв ячĕпе Михаил Игнатьев чи маттуррисене патшалăх наградисемпе чысланă.

**К.ПОТАПОВ.**

# Ĕçлев службин ĕççĕррисене кӳрекен тĕрев çирĕп

Госслужба занятости Чувашии

***Кĕçнерни кун, авăн уйăхĕн 25-мĕшĕнче, Чăваш Енĕн Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин коллегийĕн ларăвĕ иртнĕ. Унта республикăн Сутуилӳпе промышленноç палатин президенчĕ Игорь Кустарин, ЧР сывлăх сыхлавĕн министрĕн çумĕ Галина Германова, Чăваш Енĕн ĕçлевĕн тĕп патшалăх инспекторĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлакан Раиса Павлова тата коллегин ытти членĕ хутшăннă.***

Ларăва ведомство ертӳçи Сергей Димитриев уçнă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл коллеги членĕсене Чăваш Республикин ĕçлев рынокĕнчи лару-тăрупа паллаштарнă, халăха ĕçпе тивĕçтерессин сферинчи çивĕч ыйтусене палăртнă.

Республикăн ĕçлев службин органĕсенче шутра тăракан, ĕççĕр граждансен шучĕ çулталăк пуçламăшĕнчипе танлаштарсан 14,8% чакнă, 2014 çулхи авăн уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне 4100 çынпа танлашнă. Çапла вара вăй питти çынсен пĕтĕмĕшле шучĕпе шайлаштарсан регистрацилекен ĕççĕрлĕх шайĕ 0,73-рен 0,61% таран пĕчĕкленнĕ.

Ĕç паракансем республикăн ĕçлев службин органĕсене пĕлтернĕ вакансисен шучĕ кăçалхи авăн уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне 19559 единицăпа танлашнă, ĕç шыракан кашни çын пуçне вăтамран 4 ваканси ытла пулнă.

2014 çулта республикăра халăха ĕçпе тивĕçтерессипе çыхăннă мероприятисене Чăваш Республикин 2012-2020 çулсенче "Халăха ĕçпе тивĕçтересси" патшалăх программин 2 çумпрограммипе килĕшӳллĕн пурнăçлаççĕ. Вĕсем – "Халăха ĕççĕрлĕхрен хӳтĕлессине тивĕçтересси тата ĕçе вырнаçма пулăшасси" тата "Чăваш Республикинче ĕççĕр инвалидсене, инвалид ачасене воспитани паракан ашшĕамăшне ĕçе вырнаçма пулăшасси" программăсем.

Халăха ĕçе вырнаçма пулăшмалли программăсен мероприятийĕсене пурнăçламашкăн кăçал 469,4 млн тенкĕ уйăрма палăртнă, çав шутра 229,8 млн тенкĕ /49%/ – федераци бюджечĕн, 239,6 млн тенкĕ /51%/ – Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи.

Халăха ĕçе вырнаçма пулăшмалли мероприятисене хутшăнтарма палăртнă çынсен шучĕ 2014 çулта 81613 çынпа танлашать. 2014 çулхи авăн уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне пурнăçлакан мĕн пур çул-йĕрпе çыхăннă мероприятисене 63247 çын хутшăннă.

Ĕçлев службин органĕсем пулăшнипе 31833 çынна ĕçе вырнаçтарнă.

Ĕçлев службин органĕсенчен ĕç тупмашкăн пулăшма ыйтнă граждансене ĕçе вырнаçтарасси республикăра кăçалхи кăрлач-çурла уйăхĕсен кăтартăвĕсем тăрăх 86,9% /2014 çул валли палăртнă тĕллев индикаторĕ 82,6%/ танлашнă.

"Патшалăхăн ĕççĕр граждансен вăхăтлăх ĕçлевне йĕркелемелли пулăшу ĕçĕсене кӳресси çинчен" темăпа Чăваш Енĕн Халăха ĕçпе тивĕçтерекен службин халăха ĕçпе тивĕçтерессине йĕркелекен пайĕн пуçлăхĕ Геннадий Константинов доклад тунă. Чăваш Енĕн Халăха ĕçпе тивĕçтерекен службин информаци технологийĕсен тата информацие хӳтĕлекен пайĕн пуçлăхĕ Александр Николаев "Чăваш Республикин ĕçлев службин органĕсенче федерацин 27.07.2006 ç. "Персоналлă кăтартусем çинчен" кăларнă 152-ФЗ № саккунĕн требованийĕсене пурнăçласси çинчен" темăпа сăмах илнĕ. Федерацин 05.04.2014 ç. "Патшалăх тата муниципалитетсен нушисене тивĕçтерме таварсем, ĕçсем, пулăшу ĕçĕсем туянмалли сферăри контракт тытăмĕ çинчен" кăларнă 44-ФЗ № саккунĕн требованийĕсене пурнăçласси çинчен Чăваш Енĕн Халăха ĕçпе тивĕçтерекен службин финанс пайĕн пуçлăхĕ Фаина Титова каласа панă.

Çак çул-йĕрсемпе çыхăннă ĕç опычĕпе Вăрмар, Пăрачкав районĕсен, Шупашкар тата Канаш хулисен халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрĕсен директорĕсем паллаштарнă.

Лару пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх коллегин тивĕçлĕ йышăнăвĕсене хатĕрленĕ.

Юлашкинчен Сергей Димитриев нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата халăха ĕçе вырнаçма пулăшас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Енĕн Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин тĕп специалист-экспертне Маргарита Германовна Плотниковăна, Вăрмар районĕн халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрĕн тĕп бухгалтерне Альбина Николаевна Лукинана тата Куславкка районĕн халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрĕн тĕп инспекторне Резида Харисовна Солдатовăна Раççей Ĕçлев министерствин Хисеп грамотисене парса чысланă.

ЛАРУ

# Черет хăçан пĕтĕ?

***ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин республикăн ĕç тăвакан влаç органĕсем РФ Президенчĕн 2012 çулхи çу уйăхĕн 7-мĕшĕнчи Указне епле пурнăçланине уçăмлатма черетлĕ лару ирттерчĕ***

Унта хутшăннисем кĕçĕн ӳсĕмрисене шкул çулне çитменнисен организацийĕсенче вырăнпа ытларах тивĕçтерес, черете пĕтерессипе çыхăннă ыйтусене тишкерчĕç. ЧР вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов хăйĕн докладĕнче палăртнă тăрăх – республика хăйĕн умĕнчи тивĕçе туллин пурнăçлать. "Ĕçлекен ача сачĕсемпе тухăçлă усă куратпăр. Кăçал çĕнĕрен тата 14 хута каймалла, малашне 12 тума палăртатпăр, – терĕ Владимир Николаевич. – Шкул çулне çитменнисен 75,2 процентĕ ача сачĕсене çӳрет".

Кăтарту уйрăмах Çĕнĕ Шупашкар /98,9%/, Шупашкар /82,9%/, Канаш /83,5%/, Улатăр /83,4%/, Çĕмĕрле /80,1%/ хулисемпе Çĕрпӳ /72,6%/, Патăрьел /70,3%/ районĕсенче пысăк. Çав вăхăтрах Çĕмĕрле тăрăхĕнчи виçĕ шăпăрланран иккĕшĕ халĕччен те вырăн кĕтсе илеймест.



Черете вуçех пĕтересси пирки калама иртерех-ха, çапах вăл çулсерен чакса пырать. 2014 çулхи авăнăн 1-мĕшĕ тĕлне 34 пин ачана шута илнĕ, вăл шутра 15,4 пинĕшĕ – 1,5 çулран, 1,1 пинĕшĕ виçĕ çулран аслăрах. Виççĕрен иртнисен черетне Элĕк, Патăрьел, Йĕпреç, Канаш, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ, Етĕрне, Елчĕк районĕсенче, Çĕнĕ Шупашкар, Çĕмĕрле, Улатăр хулисенче пĕтернĕ. Канашпа Шупашкарта, Вăрнар, Комсомольски, Красноармейски, Муркаш, Вăрмар, Шупашкарпа Тăвай районĕсенче лару-тăру çав-çавах йывăр.

Юлашки çулсенче кĕçĕн çулхисен учрежденийĕсене ятарлă проектпа 2 е 3 хутлă тăваççĕ. Унашкаллисене хăтлама çăмăлрах тата йӳнĕрех.

РФ Президенчĕн асăннă Указĕпе килĕшӳллĕн ача сачĕсенче черет вуçех пулмалла мар. Шăпăрлансене кашни ушкăнра палăртнă хисепрен – 25 ача – кая мар вырнаçтармалла. Хуласенче ку нормăпа килĕшсе тăрать-ха, ялсенче ачасем сахалрах. Çавăнпа пĕчĕккисене темиçе ялтан автотранспортпа илсе çӳрессине йĕркелесен аван пулмалла.

Иккĕмĕш ыйтупа ЧР культура, националноç ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ Вадим Ефимов калаçрĕ. Раççей Президенчĕ 2 çул каялла йышăннă "Халăхсене пĕрпĕринпе килĕшӳпе тивĕçтересси çинчен" Указĕ епле пурнăçланнине пĕлтерчĕ. 2012-2014 çулсенче республикăра патшалăх наци политикипе килĕшӳллĕн нормативлă право никĕсне çĕнетнĕ, тĕрлĕ наци хушшинче хирĕçӳллĕ лару-тăру йĕркеленесрен асăрхаттарма мерăсен комплексне çирĕплетнĕ.

Чăваш Енре тĕрлĕ халăх пĕрпĕринпе килĕштерсе пурăнать, вырăнти йăла-йĕркене хăнăхса çитнĕ. Çулленех 20 ытла проектпа 70 е нумайрах та мероприяти иртет. Вăл шутра – "Кĕмĕл сасă", "Арта", "Янра, Раççей инçетлĕхĕ!" Ытти уяв та кăсăклă.

Кашни кварталрах мониторинг иртет. Раççей кăтартăвĕпе танлаштарсан халăхсене пĕр-пĕринпе килĕшӳпе тивĕçтерес енĕпе пирĕн цифрăсем курăмлăрах.

■ **В.ГРИГОРЬЕВ**

БЕТОН
РАСТВОР
КОЛЬЦА
блоки ФБС
ДОСТАВКА
Тел.: 49-00-22
8-966-249-00-22
8-909-301-31-90

БЕТОН всех марок
(М-200 - 2800 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ
(КБ-20 - 33 руб./шт)
доставка
тел.: 29-25-34, 29-24-88


СТРОИТЕЛЬНАЯ КОМПАНИЯ ЦЕНТР
БЕТОН
РАСТВОР
ДОСТАВКА
г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7
(8352) 76-56-00, 63-80-08

Мини-тракторы, мотобуксировщики, МОТОБЛОКИ, косилки роторные, двигатель дизельный 18 л. с., доильные аппараты.
Ремонт. Гарантия.
Маг. «Каскад», г. Чебоксары, ул. Университетская, 10, ост. «ул. Ахазова». Тел. 41-59-83.

МОТОБЛОКИ.
Ставлю двигатели
“Subaru” /пр-во Япония/
на отечественные мотоблоки.
Маг. “Каскад”, г. Чебоксары, ул. Университетская, 10, ост. “ул. Ахазова”. Тел. 41-59-83.

## УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**359.Бурение колодцев. Продажа** колодезных колец. Доставка и установка. Т. 8-903-379-09-01.

**416. Экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**456.Услуги КамАЗа**-55102, **ф/погрузчика. Доставка** песка, щебня, кирпича, гравмассы. Сертифицированы. Т. 8-903-389-30-39.

**459.Установка заборов,** ворот, винтовых свай. Т. 89176500640.

**460.Обшивка домов** сайдингом, утепление. Т. 8-902-287-27-77.

**513.Чистка колодцев.** Т. 8-961-342-90-59.

**590.Удаление вмятин, полировка, химчистка,** шумоизоляция, карбон. Т. 36-22-88.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т.89603109878.

**433.КОРОВ.** Т. 89278508564.

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
РЕКЛАМА ПӖЛТЕРӲ
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчӗ, 13-мӗш ҫурт, 316-мӗш пӳлӗм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## П Р О Д А Ю

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х-20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём.** Дёшево. Д-ка. Т. 8-903-358-30-21, 44-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём.** Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 8-961-339-33-63.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, бой кирпича.** Т. 8-903-322-57-66.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 8-902-288-14-47, 38-75-74, metalservis21.ru

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**28.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 8-937-010-10-54.**

**30.ОКНА** от 4200 р.; **ДВЕРИ стальные** от 8900 р. Акция действует до конца месяца. Звоните по тел. **8-937-954-92-45.**

**33.ГРАВМАССУ, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 8-905-346-56-71.

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 8-967-470-27-36.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 8-937-010-01-41.

**46.ПЛИТЫ** тротуарные, **БРУСЧАТКУ.** Дёшево. Т. 8-967-470-68-19.

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **кирпич.** Д-ка. Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**55.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер, доставка – бесплатно. Скидки. Т. 89370124111.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 89033891400.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. **Т. 89379528467,** Владимир.

**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**79. Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**128.Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 15 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**172.ГРАВМАССУ, КЕРАМБЛОК, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

**317.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, навоз. Дёшево. Доставка. Т. 89278502821.

## Саламлатпӑр

*Канаш районӗнчи Атнашра ҫуралса ӳснӗ, халӗ Мускавра пурӑнакан Борис Иванович ПЕТРОВА сумлӑ юбилей ячӗпе хӗрӳллӗн саламлатпӑр, ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми телей, ӑнӑҫу сунатпӑр.*

*Иван Ильин, Николайпа Вячеслав Касьяновсем, Александр Денисов, Валентин Григорьев, Анатолий Семенов.*



## П Р О Д А Ю

**390.Блоки, кирпич** красный, силикатный; **гравмассу,** песок, **керамзит,** кольца. Т. 89278629166.

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**618.Копалки,** сортировки, **плуги,** дискаторы, **разбрасыватели.** Дёшево. Доставка. Т. 8-937-955-98-02.

**631.1-комн. кв-ру.** Т. 89876627150.

**632.Стельную первотёлку.** Т. 8-937-371-70-90.

**654.Керамблоки 20х20х40** от производителя. Д-ка. Т.: 36-26-23, 89033797768.

**655.Кольца колодезные** – диам. 0,7 м., 1 м., 1,5 м. Доставка. Т.: 36-26-23, 89033797768.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 89250022238.

**604.МОНОЛИТЧИКИ в Москву.** Т.: 8-966-108-22-36, 8-926-686-73-21.

**636.ТРЕБУЮТСЯ** в Новочебоксарск **операторы ТПА** /обучение без отрыва от производства, з/п сдельная, график работы 2/2/. Т/ф: 73-03-08, 74-11-81.

**645.**Организации требуются **повара, кухонные** рабочие, **упаковщики, грузчики.** Для работы в Москве и МО. Вахта. З/ п от 25000 руб. Проживание, питание за счет организации. Т. 8-926-653-72-84, Дмитрий.

**Раҫҫей Федерацийӗн "Раҫҫей Федерацийӗнчи судьясен статусӗ ҫинчен" саккунӗн 5 статйипе килӗшӳллӗн Чӑваш Республикин Судьясен квалификаци коллегийӗ вакантлӑ ҫак должноҫсем уҫӑлни ҫинчен пӗлтерет:**

**– Шупашкар хулинчи Ленин районӗн сучӗн председателӗн,**

**– Шупашкар хулинчи Калинин районӗн сучӗн председателӗн ҫумӗн,**

**– Шупашкар хулинчи Мускав районӗн 1-мӗш суд участокӗн миравай судйин.**

**Раҫҫей Федерацийӗн "Раҫҫей Федерацийӗнчи судьясен статусӗ ҫинчен" саккунӗн 5 статйин 6 пунктӗнче палӑртнӑ тивӗҫлӗ документсемпе ыйтусене 2014 ҫулхи юпа уйӑхӗн 27-мӗшӗччен ӗҫ кунӗсенче 8-тан пуҫласа 12 сехетчен тата 13-рен пуҫласа 17 сехетчен, 2014 ҫулхи юпа уйӑхӗн 27-мӗшӗнче 18 сехетчен ҫак адреспа йышӑнаҫҫӗ: Шупашкар хули, Президент бульварӗ, 12, 302 пӳлӗм.**

**Ыйтусене хӑҫан тата ӑҫта пӑхса тухассине претендентсене ҫирӗплетнӗ йӗркепе пӗлтерӗҫ.**

Администрация Урмарского района извещает о наличии предполагаемых для передачи земельных участков из категории земель сельскохозяйственного назначения в аренду для ведения сельскохозяйственного производства физическим и юридическим лицам, сроком на 10 лет: площадью 1442937 кв.м., кадастровым №21:19:200101:29, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Урмарский район, с/пос. Ковалинское, в северо-восточной части кадастрового квартала, размер годовой арендной платы - 43300 руб.; площадью 2280407 кв.м., кадастровым №21:19:190101:48, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Урмарский район, с/пос. Ковалинское в западной части кадастрового квартала, размер годовой арендной платы - 68400 руб.; площадью 200000 кв.м., кадастровым №21:19:040101:138, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Урмарский р-н, Шихабыловское с/пос., северо-западной части кадастрового квартала 21:19:040101, размер годовой арендной платы - 6900 руб. Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования газеты по адресу: Чувашская Республика, п. Урмары, ул. Мира, д.5, каб. 204 в администрации Урмарского района.

Кадастровый инженер Семенов А.И., адрес: ЧР, Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Советская, д.50, офис 311, тел.8(83540)2-26-14, квалифицированный аттестат №21-11-5, подготовил проект межевания земельных участков, образованных путем выдела из землепользования СХПК "Сад", с кадастровым номером 21:21:000000:32, расположенного: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Большекатрасьское сельское поселение, юго-восточнее д.Чандрово рядом с полем № 4 второго полевого севооборота.5

Заказчиком работ по подготовке проекта межевания земельных участков является Фасхутдинов Минсефер Гилачович, адрес: ЧР, г.Чебоксары, ул.2-ая Чандровская, д.36.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу: ЧР, Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Советская, д.50, офис 311.

Обоснованное возражение относительно размера и местоположения границ, выделяемого в счет земельных долей земельного участка принимается в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: ЧР, Чебоксарский район, пос.Кугеси, ул.Советская, д.50, офис 311, а также в отдел кадастрового учета - ФГБУ (Федеральная кадастровая палата Федеральной службы государственной регистрации, кадастра и картографии) по чувашской Республике - Чувашии, расположенного по адресу: г.Чебоксары, Московский проспект, д.37.

Чӑваш Республикин Журналистсен союзӗн правленийӗ 2000-2009 ҫулсенче Канашри издательство ҫурчӗн директорӗнче ӗҫленӗ, РФ Журналистсен союзӗн членӗ, Чӑваш Республикин промышленноҫӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ

**Николай Игнатьевич ПАВЛОВ**

вилнӗ пирки тӑванӗсемпе тата ҫывӑх ҫыннисемпе пӗрле чӗререн хурланнине пӗлтерет.

УЯВ

# "Атăл хĕрринче çавăн пек хула пур..."



● "Ачасен хулинче" хаваслă та кăсăклă.

*Çĕнĕ Шупашкарсем хулан 54-мĕш çуралнă кунне паллă турĕç. Телее, çак кун çанталăк та аван тăчĕ. Уяв мероприятийĕсен программи Çĕнтерӳ тӳремĕнче "çăлтăрпа" зарядка тунинчен пуçланчĕ. Ăна кикбоксинг енĕпе тĕнче 5 хутчен чемпионĕ пулнă Алексей Соловьевпа спорт аэробики енĕпе Пĕтĕм Раççейри ăмăртусенче нумай хутчен çĕнтерӳçĕ ята илнĕ Ольга Журавлева ертсе пычĕç. Хула кунне халалласа кашни шкулта ирхи зарядка иртрĕ. Н.И.Полоруссов-Шелепи ячĕллĕ вулавăшра çамрăк ăру валли "Атăл хĕрринче çавăн пек хула пур" презентаци пулчĕ. Çĕнĕ Шупашкарта "Ăстасен хули", "Пултарулăх хули", "Ача-пăча хули", "Çамрăксен хули", "Çемье хули" лапамсем ĕçлерĕç.*

ГЭСстрой çурчĕ умĕнче регионсен хушшинчи "Ăсталăх та, хавхалану та..." декорацие хушма искусство фестивалĕ иртрĕ. Унта Хусантан, Йошкар-Оларан, Чул хуларан, Суздальтен, Шупашкартан килнĕ тата спутник хулари ăстасем хăйсен ĕçĕсемпе паллаштарчĕç. Кун каçа алă ăстисем йывăçа çунтарса эрешсем тăвас, чăваш наци пуканисене ăсталас, тĕрлес енĕпе ăсталăх сехечĕсем йĕркелерĕç.

"Химик" культура керменĕ умĕнче "Ылтăн кĕркунне – 2014" пахча çимĕçпе улма-çырла ярмăрккирен кураве сад ăстисемпе çут çанталăк тусĕсене пухрĕ. Вĕсен кăмăлне çывăхрах иртнĕ хĕрарăмсен клубĕсен "Мăнаçлан пирĕн юратнă хула" концерт çĕклерĕ. Каçхине 18 сехетре А.Г.Николаев космонавт ячĕллĕ Тĕп стадионта "Çĕнĕ Шупашкар – пирĕн пĕрлехи кил" уяв программи пуçланчĕ. Унта химиксен хулинчи, Шупашкарти, Чăваш Енри районсенчи чи лайăх ача-пăча, фольклор, эстрада тата ташă ушкăнĕсем хутшăнчĕç. Хула çыннисене ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Сергей Михеев, Çĕнĕ Шупашкар пуçлăхĕ Олег Матвеев тата хула администрацийĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Марина Соловьева саламларĕç. Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкарти "15 суток" блюз коллектив, Мускавран килнĕ "Мистер Твистер" ушкăн, "Ночные волки" мотоклуб байкерĕсем шоупа савăнтарчĕç. Уяв чаплă фейерверкпа вĕçленчĕ.

■ **Роза АНАТОЛЬЕВА**

# Хусанта – чăвашла кĕнеке уявĕ

*Хусанта Тутар Республикин Писательсен союзĕн Г.Тукай ячĕллĕ клубĕнче тутарсен паллă поэчĕн, Совет Союзĕн Геройĕн Муса Джалилĕн нумаях пулмасть Шупашкарта чăвашла кун çути курнă "Моабит тетрачĕсем" кĕнекен презентацийĕ иртрĕ.*

Поэзи тата икĕ халăхăн туслăх уявне Чăваш халăх поэчĕ, ЧР Патшалăх премийĕн лауреачĕ Порфирий Афанасьев, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Çеçпĕл Мишши премийĕн лауреачĕ Раиса Сарпи, "Моабит тетрачĕсен" тулли вариантне /1956 çулта кĕнекене кĕскетсе пичетленĕччĕ/ чăвашла куçарнă Валери Туркай хутшăнчĕç.

Чăваш Ен хăнисене Тутар Республикин Писательсен союзĕн правленийĕн председателĕ Рафис Курбанов, Тутарстанри Чăваш наци культура автономийĕн ертӳçи Константин Яковлев, Тутар халăх поэчĕ, Раççей тата Тутарстан Патшалăх премийĕсен лауреачĕ, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Ренат Харис, Тутартсан Ăслăлăхсен академийĕн вице-президенчĕ Джавдат Сулейманов профессор тата ыттисем кĕтсе илчĕç. Вĕсем Валери Туркай ĕçне пысăк хак пачĕç.

Г.Тукай ячĕллĕ клубра çав каç Муса Джалиль сăввисем чăвашла та, тутарла та янăрарĕç. Чăвашла вĕсене Чăваш Ен хăнисем вуларĕç, Г.Камал ячĕллĕ Тутар академи театрĕн артисчĕ Ришат Ахмедуллин тата Хусанти 155-мĕш гимнази вĕренекенĕ Родион Артемьев – тутарла. Кĕнеке уявне юрă-ташă пуянлатрĕ. Раççей тата Тутар халăх артистки Зиля Сунгатуллина, Тутар патшалăх оперăпа балет театрĕн солисчĕ Айдар Нургаянов тата "Салам" чăваш фольклор ансамблĕ пултарулăхĕпе савăнтарчĕç.

■ **О.ПЕТРОВ**

# Гороскоп

***Авăн, 29 – юпа, 5***

**Сурăх.** Ку тапхăрта çăлтăрсем пĕччен мар, ушкăнпа ĕçлеме сĕнеççĕ. Пĕр-пĕр ыйтăва уçăмлатнă чухне те юлташăрсемпе канашлани пăсмĕ. Асăрханăр: çур çулта чарăнса тăрсан юратнă çыннăр сире шанчăклă тус вырăнне хума пăрахĕ. Ĕçтешĕрсене тимлĕ сăнăр. Вĕсен хушшинче пуçлăх хушнă ĕçе пурнăçлама пулăшаканни тупăнатех.

**Вăкăр.** Çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăватăр. Анчах ытти çыннăн çулне каçасран асăрханăр, унсăрăн тăшман тупатăр. Ку эрнере ĕç темĕн чухлех пулсан та юратнă çыннăр пирки ан манăр. Çĕнĕ ĕçе пуçăниччен çичĕ хут шухăшлăр.

**Йĕкĕреш.** Яваплă утăма шухăшламасăр туни йывăр лару-тăрăва кĕртсе ӳкерĕ. Анчах шалти туйăм мĕн каланине итлесен йăлтах сирĕлĕ. Ку тапхăрта кашни сăмаха тĕплĕн шухăшласа калăр, унсăрăн савнине /мăшăра/ сăлтавсăрах кӳрентерме пултаратăр.

**Рак.** Япăх кăмăл-туйăма çиеле кăларма ан тăрăшăр. Ку ыттисене тарăхтарать кăна мар, сире яваплă ĕçе пурнăçлама та чăрмантарать. Çăлтăрсем вĕчĕрхенние савнине /мăшăра/ кăтартма сĕнмеççĕ: харкашу сиксе тухас хăрушлăх пур. Ĕçтешĕрсен кашнин кăмăлне тупма тăрăшăр.

**Арăслан.** Ĕçе пуçăниччен лайăх шухăшлăр: ăна вĕçне çитереетĕр-и? Йывăрлăхсем сиксе тухни – çурма çулта чарăнмалли сăлтав мар. Çанă тавăрса тăрăшсан тĕллев патне çитме пулатех. Савнипе /мăшăрпа/ хирĕçес хăрушлăх пур.

**Хĕр.** Йывăр лару-тăрура пĕлĕшĕрсем алă пани тĕлĕнтерĕ те, савăнтарĕ те. Вĕсенчен эсир пулăшу кĕтмен-çке-ха. Ку тапхăрта вăрттăн савнă çын пирки пĕр вĕçĕм шухăшласа çӳл тӳпере вĕçетĕр. Çĕр çине анăр. Туйăмсене ан пытарăр: савнă çынна пĕр шикленмесĕр кафене чĕнĕр – хирĕçлемĕ.

**Тараса.** Ку эрнере ĕç мăй таранах. Анчах шыва хирĕç ишмесен йăлтах пурнăçлама ĕлкĕретĕр кăна мар, карьера картлашкипе те хăпаратăр. Ĕçре хăвăра кăтартмалли майсем пулĕç. Çăлтăрсем юратура та ырă улшăнусем пуласса систереççĕ.

**Скорпион.** Паянхи ĕçе ыранa хăварас йăла ырри патне илсе çитермĕ, çавăнпа пуçлăх хушнине вăхăтра пурнăçлăр. Вĕçне çитереймен ĕçсем каялла çеç туртса пырĕç. Юратнă çынна çула тухăр е ресторанра апатланăр. Ку сире кулленхи ĕçсем пирки вăхăтлăха манма май парĕ.

**Ухăçă.** Зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çуралнисене çăлтăрсем çĕнĕ ĕçе хăюллăнах пуçăнма сĕнеççĕ. Ĕçри лăпкăлăхпа савăнма ан васкăр. Кунашкалли тăвăл умĕн пулать. Ку эрнере хĕрпе /каччăпа/ паллашатăр. Вăл сирĕн чĕрене çунтарма тытăнĕ. Анчах юрату аваăрне пуçĕпех кĕрсе ӳкме ан васкăр: малтан çак çынна лайăх сăнăр. Тен, вăл сирĕн шăпа мар?

**Ту качаки.** Çăлтăрсем ĕçре пĕр-пĕр ыйтăва ыттисемпе сӳтсе явма сĕнмеççĕ: сирĕн планăрсемпе урăххисем усă курас хăрушлăх пур. Ку тапхăрта ăнăçу килессе кĕтмелле мар – хăвăрăнах çанă тавăрса ĕçлемелле. Юратнă çынна мĕнпе те пулин тĕлĕнтерĕр.

**Шыв такан.** Зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çуралнисен те алă усса лармалла мар. Ку эрнере ĕç – купипех, çавăнпа наянлăха пусарса малалла талпăнăр. Çак тапхăрта çынпа нумай хутшăнма, чылай шухăшлама тивĕ. Хастартарах пулăр! Çапла майпа çеç çитĕнӳсем тăваятăр.

**Пулăсем.** Ку тапхăрта сывлăш çавăрма та вăхăт пулмĕ. Асăрханăр: ĕçе вăхăтра тытăнмасан ăна теприсене шанĕç. Пуçлăх сире тиркени тĕрĕс мар пек туйăнĕ. Ан пăшăрханăр, ăна итлĕр. Ку сире карьерăра утăм тума хĕтĕртĕ çеç. Юратнă çынпа вăхăт кичем иртнĕн, туйăмсем сĕвĕрĕлнĕн туйăнĕ.

## Çанталăк



кăнтăрла çĕрле

| | | | |
|---|---|---|---|
| 27.09 | + 18 | + 9 | |
| 28.09 | + 14 | + 7 | |
| 29.09 | + 14 | + 10 | |
| 30.09 | + 13 | + 7 | |
| 01.10 | + 8 | + 5 | |
| 02.10 | + 5 | + 1 | |
| 03.10 | + 6 | + 1 | |

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Ю.П.СТЕПАНОВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕ:
Йĕпреç – /8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ,13.
56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Номере 26.09.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8598. Заказ 3678.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.